26-68

# В. И. ЛЕНИН
# КОППЕРАТСИ ÇИНЂЕН КАЛАНИ

П. М. МИХХАЙЛĂВ куçарнă
Ретактăрĕ СОЛĂТТĂВ М.

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1926

# В. И. ЛЕНИН

# КОППЕРАТСИ ÇИНЂЕН КАЛАНИ

П. М. МИХХАЙЛĂВ куçарнă

Ретактăрĕ СОЛĂТТĂВ М.

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

Шупашкар — 1926

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары. Б.Советская. 6

Чувашлит № 869. Напечат. 5000 экз.

„Кашни тăнлă хресҙенпе кашни тăнлă ĕçлекен, пурнăç йăвăр пирки йе патшалăх пурнăçĕ малалла ытла та йерипен шунă пирки йăвăр шухăш çитсе çапăнас тăвас пулсан, нумай пулмасть иртнĕ кăпиталçăсемпе помешҙĕксен пусмăрлăхне аса илтĕр.

Çавна аса илни ăна хăпартлантарса ĕçлеттерĕ.

Пĕтĕм вăйсемпе, пур йенҙен те ĕçе вăйлăлатса лайăхлатмалла — ĕçлекенсемпе хресҙенсен влаçĕн пĕртен пĕр çăлăнăçĕ çакăнта".

(Ленин çырнă кĕнекесен 18-мĕш томĕ, 2-мĕш пайĕ, 77-мĕш страниҙи, 1922-мĕш çулта, çенттăпĕрĕн 10-мĕшĕ).

## В. И. ЛЕНИН
## копператси ҫинҗен калани.

### Малтан каланӑ сӑмах.

Җӑн малтан ӗҫҫыннисем копператси тума мӗншӗн пӗрлешнине пӗлес пулаҭ.

*Пӗр йенҗен* копператси тума акӑ мӗншӗн пӗрлешеҫҫӗ: копператси ӗҫӗ пуҫланнӑ пуҫланманах пур хуҫайствӑна та тӳрех усӑ параҭ. Ун ҫинҗен кашни хресҗенех пӗлет. Хуҫайствӑра кирлӗ йапаласемпе сут тӑвакан потрепиттӗл копператси, *унта ӗҫе лайӑх туса тӑраҫҫӗ пулсан*,—вӑл тавара йӳнӗрех хакпа сутаҭ, виҫине тӗрӗс виҫсе турттарса, улталамасӑр параҭ, таварӗ унта лайӑхрах пулаҭ, хӑйӗн җленӗсене тӗрлӗрен ҫӑмӑллӑхсем тӑваҭ, услам укҫипе хӑйӗн сутуилӳ ӗҫне аванлантарса, тавар хакне йӳнетсе пыраҭ; таварсем ҫителӗклех мар вӑхӑтра та, тавар хакне ӳстермест; хресҗенсем нушапа аптӑранӑ вӑхӑтра копператси вӗсене хӗстермест, вӗсен

йунне хуçасем пек ĕммест. Хăйсем ĕçлесе тунă йапаласене сутма та хресђенсем пĕрлешсе копператси тума пултараççĕ; кивçен укçа паракан йулташлăхсем туса та копператси тума пултараççĕ; тата хăйсен пур пек-çук пек укçине пĕр çĕре пухса йапаласем хатĕрлеме происвотствă копператсисем те тума пултараççĕ. Çавăн йышши копператсисем тусан, хресђенсем укçа пур пуйан çынсем каппăн (нумайăн) сутуилӯ туса услам илекен укçана хăйсен аллине хăйсемех хăвараççĕ.

*Тепĕр йенђен*, копператси, Совет правиттĕлстви пулăшнипе, пĕтĕм патшалăхри пурнăçăн йĕркине çĕнĕлле тума пулăшаť; çав çĕнĕ йĕркепе пĕтĕм патшалăхĕпех, пĕтĕм хуçайствă ĕçне пурте пĕрле ĕçлесе, мĕн пур тупнă пурлăхпа, пуйанлăхпа пурте пĕр пек усă курмалла; сăмахран каласан, копператси, Совет влаçĕ хӳттипе, пире сотсиалисăм патне йертсе кайаť; сотсиалисăм мĕнши вăл,—ун çинђен епĕр çак кĕнеке пĕтнĕ çĕрте калăпăр.

Ку кĕнекере Ленин копператсишĕн тăрăшакансене каласа хăварнă сăмахсенђен ђăн паллăраххисене пуçтарса çапнă. Ку кĕнекери

сӑмахсене—Ленин ҫырнӑ кӗнекесенҫен суйласа илнӗ, тата Ленин сӑмахпа ҫеҫ тӗрлӗрен вӑхӑтра каланине ҫынсем ҫырса пынӑ халапсенҫен суйласа илнӗ.

Ку кӗнекере копператси ӗҫне йепле майпа тумалли ҫинҫен, унӑн ӗҫне йепле илсе пымалли ҫинҫен каланисене шырамалли ҫук. Копператив ӗҫне мӗнле пуҫласа йарассине, йепле майпа ӗҫ туса тӑрассине уйесра та, вулӑсра та йури копператтив ӗҫне тума лартнӑ ҫынсем каласа, тӑнлантарса пама, канаш пама пултараҫҫӗ. Анҫах хресҫенсен ҫав хӑйсене копператтив ҫинҫен тӑнлантарса каланӑ сӑмахсене тӗплӗрех пӗлсе ҫитес тесен, тата йӑнӑш ҫулпа аташса кайас мар тесен, копператсийӗн вактӗвек ӗҫӗсене тусах тӗттӗмре вӑхӑта ирттерсе йарас мар тесен, копператтив ӗҫӗнҫе, ҫуртйӗре лайӑх, йӗркеллӗ тытса тӑракан ҫын пек пулса, улпутсемсӗрех, пуйан хуҫасемсӗрех, ҫӗнӗ пурнӑҫ йӗркине ӗҫлекенсемпе пӗрле тӑвас тесен,—копператси ҫинҫен Ленин каласа хӑварнӑ сӑмахсене лайӑхрах, тӗплӗрех шухӑшласа ӑнланмалла.

Хресҫене *копператси ӗҫне пуҫласа йанӑ тҫух мӗн кирлине* ҫак кӗнеке кӑтартса парӗ.

Мĕншĕн копператси кирли çинҫен, тата копператси ĕçĕнҫе мĕн тума кирли çинҫен çак кĕнеке лайăх ăнлантарса парĕ. Ĕççыннин хуçайства ĕçне мĕншĕн пĕрлешсе, сотсиалисăмла тума кирли çинҫен Ленин вĕрентсе хăварнине çак кĕнеке çине çырнă; сотсиалисăма мĕншĕн тӳрех тума май çукки çинҫен те çырнă; йепле Совет влаçĕ хресҫен хуçайстви майне пĕлсе, хресҫенсем ĕлĕкрен хăнăхса пуран̆нă йăлисем майлă ĕçлесе пыни çинҫен каланă; мĕншĕн хресҫен пурнăçĕн майĕсемпе, унăн йăлисемпе хирĕçмесĕр, сотсиалисăм патне йерипен утни çинҫен каланă; копператси сотсиалисăм патне йертсе кайакан çулсенҫен пĕр çулĕ иккене кăтартнă; хресҫенсемпе ĕçлекенсем пĕр шухăшлă пулса, татăлса кайайми пĕрле хытă çыхăнса пурăнни, Совет влаçĕ çирĕпленни, хресҫен копператсине ӳсме пулăшни çинҫен каланă; копператси вăйлăлантăр тесен, — копператсийе Совет патшалăхĕн пулăшса тăма кирли çинҫен каланă; копператсийĕн ĕçне Совет влаçĕн ĕçĕпе пĕрлештерсе, пысăклатмалли çинҫен каланă; йулашкинҫен тата, копператси ĕçне хăватлăлантарас тесен, хресҫен халăхне, пĕтĕмĕшпех вĕрентсе, çутта кăлармалли çинҫен каланă.

Ку кĕнекере пур çĕрте те Ленинăн сăмахĕсене вăл çырнă кĕнекесенҫен хăш вырăнтан илнине кăтартса панă. Сăмахран, вăл акă çапла: „XVIII-мĕш томăн 284-мĕш странитсине пăх", тенĕ пулсан, Ленин çырнă кĕнекесен 18-мĕш томне тупса, 284-мĕш странитсине уçса вулас пулать.

---

## I-МЁШ СЫПӐК.

**Сотсиалисӑма хӑвӑртах туса ҫитерме май ҫук; ӑна тӑвас тесен, малтан пӗр картлашка ҫинҗен тепӗр картлашка ҫине пусса хӑпарнӑ пек, ун патне ҫывхарас пулать.**

**1 Сотсиалисӑм вӑл—пуйансемпе җухӑнсем пӗр-пӗринҗен уйӑрӑлса тӑнине, классене пӗтерни. Ҫапла классем, пуйансемпе җухӑнсем хирӗҫсе тӑнине пӗтерес тесен, малтан улпутсемпе пуйан хуҫасене пӗтерес пулать.**

XVI-мӗш том, 351—52-мӗш стр.

Тӑвас сатаҗӑн ҫак каланӑ пайне епӗр туса пӗтертӗмӗр. Анҗах ку вӑл сатаҗӑн җӑн йӑвӑр пайӗ марха.

Ҫынсем пурте пӗр пек пулҗҗӑр тесен, тата ӗҫлекенсемпе хресҗенсем уйрӑм тӑнине пӗтерес пулать те, пурне те ӗҫлекен тӑвас

пулаť. Ку ёçе хăвăртах туса çитерме майĕ çук. Ку сатађ улпутсемпе хуçасене пĕтернинђен тата нумай йăвăртарах; тата ăна туса çитерме йăвăр пирки, вăл ĕç ирĕксĕрех вăраха каймалла. Ку сатађ пĕрпĕр класа сирпĕтсе кăларнипех пулса лармасť. Пĕтĕм халăх хуçайствине урăхла туса лартсан тин ăна туса çитермелле: ăна тăвас тесен, уйрăм-уйрăм хуçайствă туса пурнасса пĕтерес пулаť; вактĕвек, вĕтĕ хуçайствăсенђе таварлăх йапала туса тăрас йĕркене пăрахса, пĕтĕм халăхпа пĕрлешсе ĕçлеме, пысăк хуçайствăсем тăвас пулаť. Çапла, пĕр йышши хуçайствăран куçса, тепĕр йышши хуçайствă тăвасси ирĕксĕрех нумай вăхăта пымалла. Çавăн пек хуçайствăн çĕнĕ йĕркине приккассем парса, йури сакконсем кăларса, ирĕксĕрлесе, ђасрах тутарас тесен, вăл ĕç тата ытларах вăраха кайма пултараť.

Çавăн пек çĕнĕ йĕркепе пысăк хуçайствă тума хресђенсене нумай пулăшу парас пулаť; тырăпулă тума кирлĕ тĕрлĕрен машшинсем туйанмаллăх пулăшас пулаť. Вара хресђенсем хăйсемех çĕнĕ йĕркепе тунă хуçайствăн уссине курĕç те, савăнсах сотсиалисăм çулĕпе утĕç.

**2. Хресђен хуçайстви вăрçă вăхăтĕнђе çĕмĕрлсе, нађарланса йулнă. Машшинсемпе ĕçлесе, çĕре тӳрлетме йури шухăшласа кăларнă йапаласем тăкса, науккă каланă ытти майсемпе çĕрхуçайствине тӳрлетме пулаť: вара тырăпулă ытларах туса, хресђен хуçайствине йусама, вăйлăлатма пулаť. Анђах çавна вактĕвек хресђен хуçайствинђе тума май çук.**

XV-мĕш т., 594-мĕш стр.

Вăрçăпа çĕмĕрлсе йапăха кайнă хуçайствăна ĕлĕкхи пекех вактĕвек уйрăм-уйрăм хуçайствăсем халлĕнех хăварса, кивĕ йĕркепех ĕçлесен, епĕр нимĕнпе те хресђен хуçайствине çĕнĕрен вăйлăлатса йама пултарас çук. Хресђен халăхне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех, вăрçă авалхи ăйхăран вăратрĕ. Вăрçă вăхăтĕнђе хресђенсем технĕккă çынна тĕрлĕ майпа пĕтерекен тĕлĕнмелле хăвађĕсене пайтах курђĕç. Анђах çав технĕккă хăвађĕ хресђенсен унђђен çывăрса выртнă ăсне урăх тĕлĕшрен те вăратрĕ: хресђенсем технĕккăн тĕлĕнмелле хăвађĕ çĕрĕçĕ хуçайствине пулăшма пултарнине те курђĕç. Ку таранђђен çĕрĕçĕ хуçайстви ытти происвотствăсенђен ђăн кайа тăрса

йулнине, машшинсемсӗр ӗçленӗ пирки малалла кайайманнине курђӗç; ӳлӗмрен çӗрӗçӗн йӗркине урӑхла туса аванлантарас тесен, технӗккӑн тӗлӗнмелле хӑвађӗ пулӑшма пултарнине курђӗç. Хресђенсем ку ђухнехи ытла та тӗлӗнмелле хӑрушӑ вӑрçӑсене курса, технӗккӑн мӗн пур тӗлӗнмелле вӑйхӑвађӗ çав никама та кирлӗ мар вӑрçӑсенђе ним усӑсӑрах сайа кайнине курса, — ӳлӗмрен науккӑпа технӗккӑн вӑйех çав усал, хӑрушӑ, тискер вӑрçӑ инкекӗнђен хӑтарма пултарнине сисрӗç; тепӗр тӗрлӗ каласан, науккӑпа технӗккӑ пулӑшнипе, ӳлӗм, вӑхӑт çитсен, тӗнђере вӑрçӑ тавраш ӗ нихçан та пулмӗ. Халӗ пире тума тивӗç ӗç ак çакӑ: пирӗн çӗрхуçайствин ӗçне çӗнӗ çул çине куçарса тӑратмалла; ку таранђђен кивӗ майпа ним шухӑшсӑр ӗçленӗ йӗркесене пӑрахса, науккӑпа технӗккӑ хушнӑ пек, çӗнӗрен промыслаллӑ çӗрхуçайстви туса йамалла.

**3. Науккӑ шухӑшласа кӑларнӑ йапаласемпе нумаййӑн пӗрлешсе тунӑ пысӑк йалхуçайствӑсенђе çеç усӑ курма май пур. Анђах хресђенсене пӗрле пухӑнса хуçайствӑ тума**

**тытӑнасси йӑвӑр, апла туса ӗҫленинҗен усӑ пулассине, примерпа туса кӑтартсан тин, лайӑх ӑнланса илме пултараҫҫӗ вӗсем.**

XVI-мӗш т., 392 стр.

Тӗттӗм вырӑнсенҗе уйрӑм уйрӑм хуҫайствӑ пулса, пур ҫӗрте те пӑрҗӑн, пӑрҗӑн сапаланса темиҫе мӗлйун йал лараҭ. Ҫӑв уйрӑм ларакан хуҫайствӑсене пӗрпӗр приккас парса, айакран тӗртсе нимӗнпе те пит хӑвӑрт урӑхла туса йарайас ҫук. Апла хӑйсен кӑмӑлӗнҗе ҫук йапалана ҫын хушнипех пулса ларӗ тени ӑссӑр шухӑш ҫеҫ. Епӗр питӗ лайӑх пӗлетпӗр: ҫав темиҫе мӗлйун вӗтӗ-вӗтӗ хуҫайствӑсене тытса тӑракан хресҗенсем, сӑмахпа каланипе мар, ӗҫпе, лайӑх примерсем туса кӑтартсан тин хуҫайствӑ йӗркине урӑхла тума пултараҫҫӗ, мӗншӗн тесен хресҗенсем туса курман йапалана, сӑмахпа каланипех, кӗнеке ҫине ҫырнине вуланипех урӑхла тума йуратмаҫҫӗ, вӗсем ҫӗрӗҫ хуҫайствинҗе авалтан хӑнӑхса ҫитнӗ йӑлана питӗ хытӑ тытса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа сӑмахпа ҫеҫ калани, кӗнекесем ҫеҫ ҫырса вӗрентни—ытла усӑллӑ йапалах мар. Хресҗенсене ҫӗрӗҫне йулташлӑхсем, ушкӑнсем туса, ҫӗнӗ

майпа ĕçлесен усси ђăнахах нумайтараххине оппăтпа кăтартса тăнлантарсан çеç,—Раççей пек хресђен пит нумай çĕршывра сотсиалисăмла çĕрĕçлес тĕлĕшпе лайăх утăм тунă, тесе калама пултаратпăр епĕр.

**4. Çĕре пысăк хуçайствăсем туса пурте пĕрле ĕçлени тырăпулă нумайрах парĕђђĕ, ĕçе те сыхланă пулĕђђĕ.**

XV-мĕш т., 593—594 стр.

Вăрçăђђен пурăннă авалхи йăлапа пурăнма йурамасť. Вактĕвек уйрăм хресђен хуçайствисенђе етемĕн вăйĕ те, унăн тăрăшса ĕçленĕ ĕçĕ те ахалех усăсăр нумай пĕтет; çавăнпа малашне апла тума йурамасť. Уйрăм вактĕвек хуçайствă йĕркине пăрахса, пурте пĕрлешсе ĕçлемелле халăх хуçайстви тусан—усси икĕвиçĕ хут ытларах пулĕђђĕ; çĕрĕçне тунă ђух кирлĕ вăйхăват та икĕвиçĕ хут сахалтарах кирлĕ пулĕђђĕ; çапла çав ĕçех туса çитерме икĕвиçĕ хут çăмăлтарах пулĕђђĕ.

**5. Ушкăнпа пĕрлешсе, пысăк хуçайствăсем туса, çĕрĕçне пĕрлешсе ĕçлеме пуçласан,**

**хӑй ӗҫленипе тӑрӑшса, тӑранса пурнакан вӑтам хресҍене усӑллӑрах пулӗҍҍӗ. Ҫавӑнпа вӑтам хресҍен сотсиалисӑмӑн тӑшманӗ пулма пултараймасҭ. Вӑтам хресҍенсем хулара та, йалта та сотсиалисӑм пулса ҫиттӗр тесе, хуласенҍе те, йалсенҍе те пуйан хуҫасем халӑха асаплантарса пурӑнни пӗтӗмпех пӗттӗр тесе кӗрешекен ӗҫлекенсен класӗн тусӗ.**

XVI-мӗш т., 158, 159 стр.

Вӑтам хресҍенсем ҫынна ӗҫлеттерсе, асаплантарса, ҫын ӗҫӗпе усӑ курса пурӑнмаҫҫӗ. Ҫавӑн ҫинҍен Советӑн ӗҫлӗ ҫынӗсем лайӑх, ҫирӗп ӑнланса илҍҍӗр, тесе тӑрӑшмалла парттин. Вӑтам хресҍен ҫынна ӗҫлеттерсе усӑ курманни ҫинҍен науккӑллӑ сотсиалисӑм лайӑх кӑтартаҭ. Вак происвотствӑллӑ клас сотсиалисӑм пулсан нимӗн те ҫухатмасҭ; вӑл кӑпиталӑн (пуйан хуҫасен) йӑвӑрлӑхне сирсе пӑрахсан, питӗ нумай усӑ курма пултараҭ, мӗншӗн тесен кӑпиталиссем пур ҫӗрте те, темократтиллӗ респуплӗксенҍе те пин майпа вӑтам хресҍенсен йунне сӑрхӑнтарса, вӑтам хресҍенсене хӗсӗрлесе пурнаҫҫӗ.

Совет влаçĕн йалти пит тĕрĕс политтĕкĕ çĕнтерсе пыракан пролеттарисемпе вăтам хресђенсен сойусне, килĕшнине çирĕплетсе пыратĭ.

**6. Ĕçлекенсемпе вĕсен парттийĕ, комунисен парттийĕ, сотсиалисăм тăвасшăн кĕрешеççĕ. Анђах хресђенсем ушкăнпа пĕрлешсе çĕрхуçайстви тусан усăллăрах пулассине ăнланса çитменнине ĕçлекенсемпе вĕсен парттийĕ пĕлеççĕ; çавăнпа та Совет влаçĕ хресђенсене хуçайствă пĕрлешсе туђђĕр тесе хĕсĕрлемест. Партти хресђенсемпе пĕрле, хресђенсенђен айаккалла татăлса ӳкмесĕр, вĕсемпе пĕр ђарăнмасăр сыхăнса, сотсиалисăм патнелле утасшăн. Партти хресђенсен хуçайствине аванлатас ĕçе—хресђенсем ăнланмалла ĕçсем, вĕсен кăмăлне килекен ĕçсем туса, пуçлатĭ.**

ХVШ-мĕш т., II-мĕш пай, 28—29 стр.

Хресђенсен хаљхи пурнăçĕ питĕ йăвăр. Хресђен пурнăçĕ калама çук ђухăн пурнăç, йапăхса кайнă, хурлăхлă пурнăç. Çав хаљхи

наҫар пурнăҫпа пулас сотсиалисăмăн ырлăхĕ хушшинҫе ҫыхăну пур. Халĕ ҫав усал, хĕн-хур пурнăҫа пĕтерсе, сотсиалисăмлă аван пурнăҫ тăвас тесе тăрăшаççĕ. Ҫавăн ҫинҫен пĕтĕм ĕҫхалăхне, хресҫенсен пĕтĕм массине лайăхрах ăнлантарса парас пулат, вĕсем ун ҫинҫен курса, лайăх пĕлсе тăраççĕ. Ку ҫухне хресҫенсен пурнăҫĕ кăшт та пулин тӳрленни ĕлĕкхи вăхăтра халăх пурнăҫĕ тӳрленнĕ пек мар. Ĕлĕк те халăха пулăшу паркаланă, анҫах ун ҫухне мушике асаплантарнă, унтан мăшкăланă, хресҫене асаплантарса, халăха ирĕксĕрлесе пурăннă. Ун ҫинҫен хресҫенсем манман, Раççейра темиҫе вунă ҫул иртсе кайаҫҫен те манас ҫук. Пирĕн сатаҫ — хресҫенсене ĕҫлекенсемпе ҫыхăнтарасси, епĕр ĕҫе тытăннă ҫух, тата хресҫен шуҫĕпе таҫти инҫетри, айакри никҫан та пулас пек мар ĕҫенҫен пуҫăнманнине, хресҫенсем хăйсем ăнланмалла, вĕсене ҫывăх ĕҫсем туса—хресҫенсене пулăшса пынинҫен пуҫăннине кăтартса памалла; унтан, ку вăхăтра йăвăр пурнăҫпа выҫса, асапланса пурнакан хресҫенсене комуниссем ҫăнҫăнах усаллă ĕҫсем туса, хресҫенсене пулăшни ҫинҫен кăтартса памалла.

**7. Çавăнпа та темĕн ђухлĕ пусма картлаш-кисем çине пуса пуса хăпарнă пек сотсиали-сăм патне куçса çитме майа суйланă.**

XV-мĕш том, 592 стр.

Раççейри пек хресђен нумай патшалăхра сотсиалисăм тăвасси питĕ йăвăр сатађ,—ун çинђен каламасăр та паллă. Патша влаçне, улпутсен влаçне, улпутсем çĕр тытса пурăн-нине пĕтересси ытлашши йăвăрах мар, ун çинђен урăхла шухăшламалли те çук. Вăл ĕçе ђентăрта темиçе кун хушшинђех туса çитер-ме май пулнă, пĕтĕм патшалăхĕпе çав ĕçех темиçе ерне хушшинђех туса çитерме май пулнă; сотсиалисăм туса çитерес ĕç аплах ђас пулса çитес çук, ăна нумай вăхăт иртеђ-ђен, вăй хурса питĕ çине тăрса, тăрăшса ĕç-лесен тин, туса çитерме май пур. Ку ĕçре пирĕн утăмсеренех, вершуксеренех темĕн ђул кĕреше-кĕреше малалла утас пулаť; çĕнĕлле пулас пурнăçшăн, сотсиалисăмлă Раççейра çĕрĕçне пур халăхпа пĕрлешсе ĕçлемелле туса çитеређђен, пирĕн нумай кĕрешмелле пулаť.

Кивĕ пурнăçа тепĕр майлă çавăрса йарас-си, уйрăмăн уйрăмăн ĕçлесе пурнакан вак-

тĕвек хуçайствăсене пĕрлештерсе, пур халăхпа пĕрле ĕçлеме вĕрентсе çитересси—ђас пулса çитес ĕç мар, вăл ĕçе нийепле те хăвăрт туса çитерме май çук. Ун çинђен кирек кам та ăнланма пултарат.

Уйрăм уйрăм вĕтĕ хуçайствăллă хресђенсем пурнакан патшалăхсенђе сотсиалисăм пулса çитесси—малтан темиçе йĕрке пусма картлашкисем çинђен пусса малалла утмасăр, нийепле те пулса çитес çук.

## II-МӖШ СЫПӐК.

## Сотсиалисӑм патне улӑхмалли картлашкасенҗен пӗри—копператси.

### 8. Копператси ҫине нимрен ытла пӑхмалла.

XVШ-мӗш том, II-мӗш пай, 139 стр.

Ман шухӑшпа, пирӗн, копператси ҫине ҫителӗклех пӑхмаҫҫӗ. Октапӗр револҗутси пулнӑранпа, нимрен ытла ҫӗнӗ еккономин политтӗкне тунӑранпа копператси ӗҫӗ уйрӑмах питӗ кирлӗ ӗҫ пулса тӑраҭ.

### 9. Еккономин ҫӗнӗ политтӗкӗ, кӗскен каласан НЕП* вӑхӑтӗнҗе копператси уйрӑмах питӗ кирлӗ вырӑн йышӑнаҭ.

XVII-мӗш т., II-мӗш пай, 140 стр.

---

*) „НЕП“ тенӗ сӑмах „Новая экономическая политика“ „Еккономин ҫӗнӗ политтӗкӗ“ тенӗ 3 сӑмаха пӗрлештерсе кӗскен каланӑ сӑмах. „НЕП“ (ЕҪП) тенӗ ҫӗнӗ саккона Совет влаҫӗ 1921-мӗш ҫулта март уйӑхӗнҗе кӑларнӑ. Ку саккона халӑхӑн пӗтӗм хуҫайствине урӑхла йӗркепе тытма ирӗк панӑ, ҫимӗҫ расверскине пӑрахӑҫ тунӑ, ун вырӑнне ҫимӗҫ куланайӗ пуҫтармалла тунӑ, таҭа сутунлӑ тума ирӗк панӑ.

Еккономин çĕнĕ политтĕкĕн сакконне йышăннă ђух епĕр ирĕклĕ сутуилĕве, ирĕклĕ промышлĕннăçа пысăк вырăн панипе мар, копператси çинђен, копператси питĕ пысăк, питĕ кирлĕ пулмалли çинђен шутлама манса кайнипе, патака пĕр йĕннеллерех авса пăрахнă.

**10. Еккономин çĕнĕ политтĕкĕ вăхăтĕнђе, тепĕр тĕрлĕ каласан, сутуилӳ тума ирĕк панă вăхăтра, копператси хресђенсене пĕрлештерсе, сотсиалисăм патне илсе кайакан пусма картлашки вырăнне пулса тăраť.**

XVШ-мĕш т., II-мĕш пай, 139—140 стр.

Хресђене сутуилӳ тума ирĕк пултăр тесе епĕр, еккономин çĕнĕ политĕкне йышăнтăмăр; çапла туса епĕр сутуилӳ тăвас тенĕ çынсене сутуилӳ тума ирĕк патăмăр. Çавăнпа çак вăхăтра копператси сотсиалисăм тăвас ĕçре питĕ пысăк, питĕ кирлĕ вырăн йышăнаť. Тĕрĕссипе каласан, çак ЕÇП вăхăтĕнђе патшалăхра халăха нумайĕшне копператси ĕçне пĕрлештерсен, ку вăхăтра ђăн кирлĕ ĕçне туса çитерни пулаť; мĕншĕн тесен копператси

кашни уйрӑм ҫын хӑй инттересӗшӗн (хӑйне анҕах усӑ тӑвасшӑн) пӗҕҕен ӗҫлесе, пӗҕҕен сутуилӳ туса, усӑсӑр асапланнине пӗтерет; кашни ҫын уйрӑм сапаланса ӗҫленине, сутуилӳ тунине пӗтерсе копператси урлӑ пур халӑха, пурте усӑ курмалла, пӗрлештерме май пур. Ҕаснӑй инттереспе, ҕаснӑй сутуилӳ ӗҫӗ ӳссе пынипе йе ҕакса пынине - патшалӑх копператси урлах пӗлсе тӑма, тӗрӗслеме пултарать. Пролеттари патшалӑхӗн влаҫӗ пур пы сӑк происвотсвӑ ӗҫне хӑй аллинҕе тытса тӑни, патшалӑх влаҫӗ пролеттари аллинҕи, тата вак-тӗвек хуҫайствӑпа пурнакан темӗн ҕухлӗ нумай мӗлйун вак, пит вак хресҕенсемпе сойусра тӑни, хресҕенсене йертсе пырас ӗҫ пролеттарисем аллинҕе ҫирӗп тӑни, тата ытти те,—ҫавӑ вӑл копператсирен, пӗр копператсирен анҕах, епӗр ӗлӗк сутуилӳ копператсийӗ тесе кулнӑ копператсирен, халӗ те, ЕҪП вӑхӑтӗнҕе унӑн хӑшпӗр йенӗнҕен кулма тивӗҫлӗ копператсирен сотсиалисӑмлӑ тума май пуррине кӑтартаканни мари? Ку вӑл сотсиалисӑмлӑ опҕӗствах мар та, ҫапах та вӑл сотсиалисӑмлӑ пурнӑҫа тунӑ ҫӗрте мӗн кирли пуррине ҫителӗклине пӗлтерет.

**11. Копператсийе тивӗçпе (правапа) ирӗк пани—пӗђӗк хресђен хуçайствисене тивӗçпе ирӗк пани пулаť. Анђах копператси ђастнӑй сутуилӳрен кирлӗрех йапала, мӗншӗн тесен копператси мӗлйунлӑ халӑха пӗрлештерсе, ушкӑнпа ӗçлеме пулӑшаť.**

1921 çулта, 21 III/IV, XVIII том, I п., 219-220 ст.

Копператси патшалӑх кӑпиталисӑм майӗ пур, унӑн ӗçӗ йепле пынине пӗтӗмпех сӑнаса, пӗлсе тӑма патшалӑх влаçне питӗ йӑвӑр ӗç, мӗншӗн тесен копператсийӗн ӗçӗ патшалӑх аллинђе тӑман пирки йанках уçӑ курӑнса тӑмасť. Пӗђӗк хуçасем копператсиленнинђен, вак пуршуаçиллӗ хутшӑну (отношения) сиксе тухаť, ӑна ӳсме пулӑшаť. Раççейра ку вӑхӑтра копператсийе тивӗçпе ирӗк пани кӑпиталисӑма правапа ирӗк пани пулаť. Çапла çак куçа курӑнсах тӑракан йапалана курас мар тесе йури куçа хупни ӑссӑр хӑтланни, айӑплӑ ӗç туни пулаť. Çапах та „копператсиллӗ“ кӑпиталисӑм хуçасем аллинђи кӑпиталисӑмран уйрӑм тӑраť, унӑн патшалӑх кӑпиталисӑмӗ майӗ пур, çавӑнпа ӑна пирӗншӗн (пӗтӗмпех усӑллӑ мар пулсан та) усӑллӑ йапалах теме йураť Хресђен хӑй хуçайствинђе ӗçлесе тунӑ йапа-

ларан налок парсан, ытлашшине хӑй ирӗкӗн сутма пултарать; ҫав хресҍенсене сутма-илме ирӗк пани—кӑпиталисӑма вӑйлӑланма ирӗк пани пулать; ҫавӑнпа пирӗн хресҍенсем сутакан йапаласене копператив аллине кӗртме тӑрӑшас пулать, мӗншӗн тесен копператсиллӗ кӑпиталисӑмӑн патшалӑх кӑпиталисӑмӗн майӗ пур, копператсиллӗ кӑпиталисӑма контроҍ тума та, уҍот тума та ҫӑмӑлтарах, тата вӑл Совет влаҫӗпе мӗнле токӑвӑр туса ӗҫленине пӑхса, сӑнаса тӑма ҫӑмӑлтарах. Копператси сутуилӳ туни ҍаснӑй ҫынсем сутуилӳ тунинҍен усӑллӑрах, вӑл ҫӳлте кӑтартнӑ меслетсем йенҍен ҫеҫ мар, тата акӑ мӗншӗн усӑллӑрах: вӑл нумай мӗлйунлӑ халӑха пӗрлештерсе, пӗрле ӗҫ тума вӗрентет, ҫапла копператси урлӑ кайран пӗтӗм халӑх пурте пӗрлешсе, пӗрле ӗҫлеме пуҫлӗҫ. Копператси ӗҫӗ ку тӗлӗшрен питӗ пысӑк ӗҫ, копператси урлӑ, патшалӑх кӑпиталисӑмне пӗтерсе, сотсиалисӑм патне ҫитме пултаратпӑр.

**12. Хресҍене сотсиалисӑмлӑ ҫӗнӗ пурнӑҫӑн йӗркисем патне копператси ҫӑмӑллӑн куҫма пулӑшать.**

XVIII-мӗш том, II-мӗш пай, 149 стр.

Çакăн çинҫен пирĕн практĕклă ĕçлекен йулташсем нумайăшĕ ăнлансах çитмен. Копператси çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре нимрен ытла питĕ кирлине ăнланман пирки, пирĕн копператсийе нимĕн вырăнне те хумаççĕ. Копператси, пĕр йенҫен, таварсене тума кирлĕ йапаласене патшалăх аллинҫе тытса тăма пултарать; тепĕр йенҫен,—копператси хресҫене сотсиалисăмлă çĕнĕ пурнăçăн йĕркисем патне питĕ çăмăллăн илсе çитерет.

**13. Копператсире хресҫен опҫĕствă хуçайствине илсе пыма, сотсиалисăм тума вĕренет.**

XVIII-мĕш том, II-мĕш пай, 140 стр.

Хресҫен хуçайствăна халăхпа тытма вĕренни ҫăнахах питĕ кирлĕ, пысăк ĕç. Сотсиалисăм тăвас тесе, ĕçлекенсене тĕрлĕрен майпа пĕрлештересси çинҫен ахаљ анҫах шухăшласа, ҫĕлхепе çеç каланин усси çук; сăмахпа анҫах мар, ҫăнахах ĕç тусах, кашни хресҫене çав ĕçе хăйнех хутшăнтарса, сотсиалисăм тума вĕрентсе çитсен, вара вăл усăллă йапала туни пулать. Халĕ ĕнтĕ çав копператси ĕçне туса, епĕр сотсиалисăм тума вĕренетпĕр. Анҫах

епĕр ку картлашка çине улăхрăмăр пулсан та çителĕклĕ таран, усă курма май пур таран, усă кураймастпăр.

**14. Хăçан та хăçан, ĕçлекенсемпе хресҍенсен влаçĕ пулăшнипе, пĕтĕм опҍĕствă ĕçхалăхĕн пĕр копператив ушкăнне пĕрлешсен, çавăн ҍухне вара сотсиалисăм пулса çитессин пуçламăшĕ пулĕ.**

XV-мĕш, 585-мĕш стр.

Пĕтĕм опҍĕствă пĕрле тавар хатĕрлесе, çав тавара халăха валеçсе пама пĕр копператив пулмалла тесе шутлатпăр епĕр. Пурсăмăр та епĕр копператси тăвас ĕçе алла илнине сотсиалисăмлă партти пайтах çапăçса, кĕрешсе тунă йапала тесе шутлатпăр. Ҍăнах та ку йапалана сотсиалисăм тăвасшăн тăрăшакансем çăмăллăн тупайман. Ку ĕçе алла илес тесе хытă çапăçнă. Кăпиталисăм йури халăх сăйĕсене пĕрпĕринҍен уйăрса, сапаласа тăнă. Çапла пĕрпĕринҍен сапаланса, уйăрлса тăни нихçан та кайалла тавăрăнмалла мар, пĕтĕмпех пĕтмелле; пĕтĕм опҍĕствă ĕçхалăхĕн пĕр коппаративлĕ ушкăнĕ пулмалла.

## III-МĔШ СЫПĂК.

### Совет влаçĕпе копператси.

15. Халĕ ĕнтĕ копператси пĕтĕм хресђен çыннисемшĕн те усăллă: ĕлĕк вăл пуйан, вăйлă пурнакан хресђенсемшĕн кăна усăллăђђĕ. Хапрăксавăт хуçисемпе улпутсен аллинђен тухса, хресђенсемпе ĕçлекенсен аллине влаç кĕнинђен анђах вăл килет, — çавна лайăх астуса тăмалла. Çак çĕнĕ, ĕçхалăхĕн влаçĕ йертсе пынипе кăна копператси пĕтĕм хресђенсемшĕн те усăллă пулма пултарать, копператси сотсиалисăм патне улăхмалли пусма картлашки пулма пултарать. Çапла ĕнтĕ, хăйсен тăшманĕсемпе—улпутсемпе, хапрăксавăт хуçисемпе—кĕрешни—сотсиалисăм йеннелле хăпарнă çул çинђи пусман пуçламĕш картлашки вырăнне пулса тăрать; ĕçхалăхĕ хăйĕн тăшманĕсене çĕнтерни, патшалăхра пĕтĕм влаçа хайĕн аллине туртса илни,—первейхи картлашка

**çине улăхни пулаť, мĕншĕн тесен, ĕçхалăхĕ хăйĕн аллине влаçа туртса илмесен, нийепле копператси те хресђенсемпе ĕçлекенсене çын ĕçленипе тăранса пурăнакансен пусмăрлăхĕнђен пĕр вăрçă çапăçусăрах хăтарас çук. Çавна ĕлĕк копператсире ĕçлекенсем тăнланман; копператси туса пĕрлешнĕ ĕççыннисен çавна хытă асра тытса тăрас пулаť.**

XVIII-мĕш т., II-мĕш пай, 144 стр.

Роперт Оуенран пуçласа, пурнăçра никçан та пулайми шухăшласа кăларнă плансем хăш йенђен йăнăш пулăнши? Сотсиалисăм йĕркине пĕрлешсе пурăнса, влаçа ĕçлекенсен аллине туртса илмесĕрех, пуйансемпе пĕр çапăçу тумасăрах, ĕçлекенсен йунне ĕмекенсене сирпĕтсе йамасăрах, хаљхи опђĕствăн пурнăçне тӳрлетсе, урăх, тӳрĕ çулпа йама ĕмĕтленнĕ ĕлĕкхи копператтăрсем. Ђăн малтан вĕсем влаçа ĕçлекенсем аллине туртса илме кирлине манса хăварнă. Вĕсен, „копператсиллĕ“ сотсиалисăм тенĕ, планĕсем, аван çынсем тупса кăларнă пек, тĕнђере пулмалла мар йапаланах пулĕ тесе ĕмĕтленни — фанттаçи çеç; пĕр копператси тунипех, пĕр

пĕринпе кĕрешсе пурнакан, икĕ пайа уйăрлакан класа, пĕрне пĕри пулăшса тăракан туса, туслаштарса йарас щухăш — нимĕне йурамисĕр ĕмĕт вăл.

Хресђенсемпе ĕçлекенсем политтĕк влаçĕшĕн хăйсен тăшманĕсемпе кĕрешмесен, патшалăхра сотсиалисăм пулас çук. Çапла калани тĕрĕс тесе епĕр пĕр иккĕленмесĕрех çирĕппĕн калама пултаратпăр.

**16. Ĕçхалахĕ влаçа хăйсен аллине илнĕ ђух, хăйĕн тăшманĕсене çапăçура çĕнтернĕ ђух, вăл хăйĕн влаçне, Совет влаçне пулăшса тăрсан, копператси йерипен халăха сотсиалисăм патне илсе пыма пултарат̆.**

XVIII-мĕш т., II-мĕш п., 139 стр

Ĕлĕкхи копператтăрсен ĕмĕђĕсенте пурнăçа кĕртмелле мар йапаласем (фанттаçисем) нумай пулнă; вĕсем çапла шухăшланинђен тĕлĕнсе кулмалла. Вĕсем пурнăçра никçан та пулмалла мар йапаласем çинђен шухăшлани ăçтан курăнат̆? Вăл акă мĕнтен палăрат̆: ĕçлекенсен класĕ хăйне хĕсĕрлесе пурнакансемпе кĕрешсе, вĕсене сирпĕтсе кăларасси ђăн кирлĕ ĕçĕн никĕсĕ иккенне — вĕсем

ăнланаймаççĕ; çакă вĕсен ђи пысăк йăнăшĕ, фанттаçи пулаť. Халĕ епĕр експлоаттатăрсене сирпĕтрĕмĕр те, малтан пулма май çук ĕçсене вырăна кӳртме пире май тин килђĕ; пулмалла мар пек йапаласенех епĕр тăватăва лартрăмăр.

**17. Влаçа хăй аллине туртса илсен тин ĕçхалăхшĕн пĕтĕм хăвађĕпе хăй пурнăçне, хуçайствине улпутпа хуçасăрах канăçлă йусама май килђĕ хайхи.**

XVIII т., II-мĕш п., 144 стр.

Акă пăхăрха: халĕ ĕç пĕтĕмпех урăхла пулса кайрĕ; вăл мĕнтен килет? Ĕçлекенсен класĕ хăйсен аллине влаçа туртса илнинђен халăх йунĕпе тăранса пурнакансен влаçĕ пĕтнĕрен, пĕтĕм хапраксавăтсем ĕçлекенсен класĕ аллине кĕнĕрен. Вăхăтлăха хăшхăш савăтсене халĕ те çав халăха хĕсĕрлесе пурăнаканнисенех Совет влаçĕ тара паркалаť, анђах вăл кунсем вăрăма пырас çук, — вăй кĕрсен, ĕçлекенсен влаçĕ халăх йунĕпе тăранса пурнакансене, хапрăкпа савăтсене тара парса нумайах усă кăтартас çук.

Епӗр халӗ копперацси хӑватланни—сотсиалисӑм ӳсни пулаҭ тени, тӗрӗс, вырӑнлӑ сӑмах пулаҭ. Сотсиалисӑм ҫине халӗ епӗр урӑхларах пӑхатпӑр, ун ҫинђен тӳррипех каламалла. Пирӗн шухӑш улшӑнни палӑрсах тӑраҭ: епӗр ӗлӗк хамӑр алла влаҫа йепле те пулин илесшӗн кӗрешнӗ, револђутсийа ҫийеле кӑларасшӑн, влаҫа хамӑр алла илесшӗн тӑрӑшнӑ; ҫав ӗҫе ун ђух—ђӑн кирлӗ ӗҫ вырӑнне хунӑ. Халӗ ӗнтӗ епӗр мӗн пур вӑйпа ҫутта тухма, никампа вӑрҫмасӑр, пурнӑҫа килӗшӳллӗ йусатпӑр. Пирӗн хамӑр алла илнӗ ирӗке йут патшалӑхсем пирӗнтен кайалла туртса илесрен сыхламалли пулас мар пулсан, пирӗн мӗн пур вайхӑвӑт куђттурлӑ пурнӑҫ тунӑ ҫӗре ҫеҫ кайса тӑнӑ пулӗђђӗ.

Ђӑнах та ҫав хамӑр ирӗке тӑшмансенђен сыхласа хамӑр вӑйхӑвата пӗтерниниђен пуҫне, ытти вӑйхӑватпа епӗр економӗккӑпа куђттурлӑ пурнӑҫ тӗлӗшӗнђен ҫеҫ тӑрӑшатпӑр; тепӗр тӗрлӗ каласан, халӗ ӗнтӗ епӗр мӗн пур вӑйпа халӑха пурӑнма ырӑ пултӑр тесе куђттурлӑ пурнӑҫшӑн ҫеҫ тӑрӑшатпӑр.

**18. Канăçлă ĕçлесе хуçайства хăватлантарас ĕçре ђăн пысăк сатађ —ĕçхалăхне копператтива пĕрлештерессси.**

XVIII-мĕш т., II-мĕш пай, 139 стр.

Пирĕн халĕ патшалăх влаçĕ ĕçлекенсен Класĕ аллинђе; хапрăкпа савăтсем таварсем тунă ђух кирлĕ пур йапаласем те ĕçлекенсен влаçĕн аллинђех; çавăнпа ĕнтĕ халĕ пирĕн ђăнахах копператсисем туса ун тавра халăха пĕрлештерес сатађ çеç йулнă.

**19. Совет влаçĕ мĕн пур майпа копператсийе вăйлăлатма пулăшаť, анђах вăл пĕтĕм хура халăх (масса) пĕрлешсе тунă копператсийе çеç пулăшаť.**

XVIII-мĕш т., II-мĕш п., 141 стр.

Кирек йепле опђĕствă йĕрки те укçа парса пулăшмасăр пулма пултараймасť Леш хайхи „ирĕксем паракан“ кăпиталисăм çуралнă ђух, пайтах, темиçе çĕр мĕлйунах укçа пĕтнĕ,—ун çинђен астутарса каламасăрах пурте пĕлеççĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн хаљхи пурнăçăн йĕркине пулăшас пулсан, копператтивлĕ пурăнăç йĕркине пулăшас пулаť. Çапах та, пу-

лăшасса кашни копператтивах пулăшма кирлĕ темелле мар: пулăшас пулсан та массă нумайăн пĕрлешсе тунă копператтивсене çеç пулăшмалла. Копператтивра тăракан хресҍенсене парне (накратă, преми) памалла тени тĕрĕс шухăш; анҍах парне парас пулсан та, кам ҍăнахах копператтив ĕçне пĕтĕмпех тăнласа, халăха усă пултăр тесе тытăннисене кăна накратă памалла, акă ăçта вăл кирлĕ вырăнлă ĕç. Йала копператтив уçма пынă çын (копператтăр) йалта лавкка уçаť пулсан, йалти халăх, тĕрĕссипе каласан, хăй шухăшĕпе копператтив ĕçне ҍĕрернех тăвасҍĕ тесе те хыпаланмасť; анҍах копператси тусан тен хамăрах усă пулĕ тесе, сăнамалла копператтива кĕрет.

**20. Совет влаçĕн сатаҍĕ—пурлăх тĕлĕшĕнҍен çăмăллăхсем (лҍкоттăсем) парса, копператсийе пулăшасси. (1925-мĕш çулта май уйăхĕнҍе Советсен III-мĕш сиесĕ тунă постановленире Ленин каласа хăварнă шухăшсене Совет влаçĕ тĕрĕс туса тăнине пур хресҍен те вуласа пĕлме пултараť).**

XVIII-мĕш т., II-мĕш п., 141—142 стр.

Политтĕк тĕлĕшĕнђен пăхсан, влаçăн копператсийе кирекхăçан та љкоттăсем памалла; çав љкоттăсем пурлăх (имущественный) тĕлĕшĕнђен пулмалла: панккăран укçа панă ђух, прођăнсем катăкрах илмелле, тата ыттисем те. Патшалăхăн, укçа панă ђух, копператсине ахаљ хуçайствăсене панинђен (ђастнăй претприниматтĕлсенђен) ытларах укçа памалла.

**21. Совет влаçĕ копператсийе пулăшас тĕлĕшрен ђарăнса тăрас çук, анђах мĕнле майпа (формăпа) пулăшасси — копператси хăй йепле ĕçленине курса памалла. Копператсийĕн ахаљ сутуилӳ тăвас çулпа çӳреме кирлĕ мар, унăн сотсиалисăм çулĕпе çӳрес пулаť,—çавă питĕ кирлĕ ĕç.**

XVIII-мĕш т., II-мĕш п., 142 стр.

Економи тĕлĕшĕнђен те, укçатенкĕ тĕлĕшĕнђен те, панккăран укçа парас тĕлĕшрен те—копператсийе йĕркипех, уйрăм çăмăллăх памалла. Халăха пĕрлештерсе çĕнĕ пурнăç тăвас тĕп ĕçре, пирĕн, сотсиалисăмлă

патшалăхăн çапла пулăшмалла. Анҕах халĕ капла пулăшни—ĕç çине каппăн пăхса туни çеç, мĕншĕн тесен, пĕтĕм ĕçе лайăхрах, пайăн пайăн уйăрса пăхсан, ĕçе пурнăçа кĕртнĕ ҕух йепле пулса пынине курсан тин, копперативсем тунăшăн халăха йепле формăпа (майпа) премисем (парнесем, накратăсем, љкоттăсем) памаллине лайăххăн пĕлсе çитме май пулаť. Копперативсем ĕçĕ вăйлăлантăр тесен, вăл халăха сотсиалисăм йеннелле йертсе кайтăр тесен, копперативе пулăшма пĕлмелле, ăна пулăшмалли майне (формине) тупмалла. Сăмахран каласан, акă мĕнмĕн пĕлмелле: парнесем (премисем) копперативе хăçан памалла, мĕншĕн памалла; йепле майпа (формăпа) премии парсан çителĕклĕ пулăшу пулĕ; йепле пулăшсан, копперативе ĕçлекен ҕăнҕăн копперативсăр пулĕ, çавсене пĕлсе, астуса тăрса, накратăсем памалла. Хапрăкпа савăтсем пĕтĕм халăх аллинҕе тăнă ҕух, пролеттарисем пуршуаçине çĕнтерсе илнĕ ҕух, копперативсем ĕçне тĕпĕйĕрĕпе ăнланса тĕрĕс ĕçлекен копперативсемсем пулса çитсен,—вара вăл сотсиалисăм йĕрки пулса çитнипе пĕрех пулаť.

**22. Совет влаҫӗ ҫӗнӗрен, ирӗклӗ патшалӑх ӗҫне тунӑ ҍух, копператсийӗн те ҫав ӗҫе туса, Совет влаҫӗпе пӗрлех, харӑс утса пымалла.**

XV-мӗш т., 586 стр.

Копператси тӑвакан пысӑк ӗҫ, Совет влаҫӗ тӑвакан пысӑк ӗҫпе пӗрлешсе, хутшӑнса, пӗр ӗҫ пулса каймалла.

**23. Пӗтӗм тӗнҍере икӗ вӑй хирехирӗҫ тӑҍӗҫ: пӗр йенҍе—хӑйсен пурлӑхне сыхлакан ҫӗр улпуҍӗсемпе хапрӑкпа савӑт хуҫисем; тепӗр йенҍе—пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ, тата ӑна йертсе пыракан хапрӑкпа савӑтсенҍе ӗҫлекенсем; кусем—пуйансемпе тата типпырсемпе кӗрешсе, ирӗке тухасшӑн тапранса тӑнӑскерсем. Пур патшалӑхсенҍе те сотсиалисӑма куҫас ыйту сиксе тухрӗ. Ҫак каланӑ икӗ ушкӑна уйӑрлса тӑнӑ вӑрҫӑ халӑхӗ хушшинҍе, вӑта ҫӗрте тӑраканӗ, никам та ҫук. Ҫавӑнпа копператси, хӑй тӗллӗн уйрӑм, хӑйӗн пӗҍӗкҫӗ кӗтессине пӑҍӑрӑнса, хӑй ӗҫне туса тӑрӗ тесе каламалли ҫук. Копператси Совет влаҫӗпе пӗр ӗҫех туса тӑрать; унӑн (коппе-**

**ратсин) Совет влаçĕн пур политтĕкĕпе те, Совет влаçĕ тунă пур ĕçсемпе те пĕр çулпах утса, урасене харăс йарайара пусас пулаť.**

XV-мĕш т., 587 стр.

Çак икĕ тĕрлĕ шухăшпа тăракан ушкăн, пĕрине пĕри парăнмасăрах, пурăнма пултарĕç тесе ĕмĕтленмелли те çук. Вĕсенђен хăш те пулсан пĕри парăнмасăр пулас çук. Пĕр йенђе тăраканнисем хăйсен пурлăхне йепле майпа та пулин сыхласа, çăлса хăварасси çинђен шухăшласа тăраççĕ; тепĕр йенђе тăраканнисем, пролеттарисем, хăйсем валли уйрăм çул тупнă; çав икĕ ушкăн хушшинђе урăх ушкăн пулас çук. Пурнăç хăйĕн тураттисене—йе кăпиталпа пĕрле хытă йавса хурĕ, йе çав туратсене Совет Респуплĕкĕпе тата хытăрах, çирĕпрех йавса лартĕ. Ку ђухне ĕнтĕ сотсиалисăм вăхăђĕ çитни çинђен пур те питĕ лайăх пĕлсе тăраççĕ.

**24. Копператсин Совет влаçĕпе тађă пĕрлешес пулаť, унăн мĕн пур тăвас тенĕ шухăшĕсемпе, ĕçĕсемпе пĕтĕмпех хутăшса ларас пулаť.**

XV-мĕш том, 588 стр.

Çапла пурнăç улшăнма пуçлакă вăхăтра копператси Совет влаçĕпе хутăшса, пĕрлешсе ларсан, пурнăç аванланса кайĕ. Есĕр пĕлеттĕр: йут патшалăхсенђе—Анклире те, Франтсире те, Америкра та, Испанире те епĕр тăвакан ĕçе сăнамалла тунă ним усси те пулас çук ĕç вырăнне çеç хурађђĕç; халĕ ĕнтĕ вĕсем пирĕн ĕç çинђен урăхла шутлаççĕ; вĕсем ĕнтĕ хăйсен пурнăçĕ çинђен çапла калаççĕ: „пирĕн кунта хамăрăн патшалăхсенђи ĕçсем ђăнахах пурте питех аванахши ара?“ теççĕ.

**25. Ĕçхалăхне хĕсĕрлекен çĕр улпуђĕсемпе хапрăкпа савăт хуçисене вĕçне çитиђђенех çĕнтерес тесен, вĕсем çĕнĕрен хресђенсемпе ĕçлекенсене хĕсĕрлеме кайалла ан тавăрăнђђăр тесен,—хресђенсен копператсисем туса хапрăкпе савăтсенђе ĕçлекенсемпе тађăран тађă пĕрлешсе çыхăнас пулат. Ĕçлекенсемпе хресђенсем, копператси туса, пĕр ушкăна пĕрлешни çеç пирĕн çĕршыва сотсиалисăм çулĕ çине кăларса йарĕ.**

XV-мĕш том, 582—3 стр.

Пĕтĕм ĕçхалăхпе асапланакансен мĕнле те пулсан пуринĕн те пĕр шухăшлă пулса пĕр ĕçех туса тăмалла. Пролеттарисем пирĕнтен мĕн ĕмĕтленнине, мĕн ыйтнине пирĕн йаланах асра тытса тăмалла. Вак пуршуйсен — патшалăхăн çĕнĕ пурнăç йĕркине мĕнле те пулин вăтамрах майпа туса пулмĕши тесе ĕмĕтленнĕ ĕмĕђĕсем пĕтĕмпех пĕтсен, кайрантан кайран урăх майлă тума çуккине кура, вĕсен ирĕксĕрех влаçа хăйсен аллине илнĕ ĕçлекенсемпе тађăрах пĕрлешмелле пулаť. Халăх влаçĕн çакна пĕлсе тăрас пулаť.

**26. Копператси ĕçне ĕçленĕ ђух, револђутси ĕçне шанђăклă ĕçлесе тăнине, хресђенсемпе ĕçлекенсене ирĕке кăларас ĕçе тунипе пĕрле тата копператси ĕçне тĕрĕс пĕлсе, çынна улталамасăр сутуилӳ тума пĕлнине пĕрлештерме пĕлмелле.**

XVIII-мĕш том, II-мĕш пай, 142 стр.

Епĕр ку таранђђен револђутси ĕçне çителĕклĕ таран хĕрсе ĕçлерĕмĕр пулсан, револђутси ĕçне сарнă çемĕн сарса пытăмăр пулсан, тата ĕнтĕ пирĕн малашне тăнлă, çырăва

лайăх вĕренсе çитнĕ сутуилӳ тăвакан пулма пĕлес пулат̆: вара çавăн пек пулса çитсен, лайăх копператтăр пулма мĕн кирли çителĕклĕ пулса çитрĕ теме те йурат̆. Сутуилӳ тума пĕлекен çын тесе епĕр куљттурă сутуилӳ тума пĕлекен çынна çеç калатпăр. Çакăн çинђен вырăс халăхĕн, хресђенсен лайăх астуса тăрас пулат̆. Пирĕн халăх, пирĕн хресђенсем: „кам сутуилӳ тăвакан çын пур те сутуилӳ ĕçне кирлĕ пек, йурăхлă тăват̆“, тесе шухăшлаççĕ. Вăл апла шухăшлани тĕрĕс мар. Ахаљ сутуилӳ тунипе куљттурлă сутуилӳ туни пĕр мар, вĕсем пĕрпĕринђен питĕ инçе уйăрлса тăраççĕ. Ахаљ сутуилӳ тăвакан Аçи *) çыннисем пек сутă тăват̆; куљттурлă сутуилӳ тăвакан—Йевроп çыннисем пек сутă тăват̆. Аçи çыннисем суттуни вăл — авалхи майпа, çынна улталаса, суттуни пулат̆; Йевропла суттуни—çынна улталамасăр, тĕрĕс суттуни пулат̆. Çак икĕ тĕрлĕ сутуилӳ тунă формисем пĕрпĕринђен темиçе ĕмĕр вăхăт хушши уйăрласа тăраççĕ.

---

*) Аçи—çĕршыв йађĕ.

**27. Ĕçлекенсемпе хресҍенсене ирĕке кăларасшăн мар çынсем: пирĕн патшалăхра ĕçлекен халăх тĕттĕм, кайа йулнă пирки сотсиалисăм пулас çук,—теççĕ пулсан, вĕсем тĕрĕсне каламаççĕ. Вĕсем ҍăн тĕп ĕçе туса çитернине—патшалăхра ĕçхалăхĕ влаçа хăй аллине çĕнтерсе илнине—манса кайаççĕ. Ĕç-лекенсем влаçа хăйсен аллине çĕнтерсе илнĕ пулсан, вĕсен тăвас ĕçĕсем: тĕттĕмлĕх-рен, пĕлменлĕхрен хăтăласси те, мĕн кирли-не практтĕкра вĕренсе çитесси те, копперат-сипе Совет претприаттисенҍе халăх хуçай-ствине йепле туса тăрассине пĕлсе çитесси те ҍасрах малалла кайма пултараҭ. Ку ĕç çăмăл ĕç мар—вĕренсе çутта тухма та кир-лĕ, халăх хуçайствине те вăйлăлатма кирлĕ; анҍах ĕçхалăхĕ аллинҍе влаçа çирĕп тытса тăрсан, çав пур йăвăрлăхсем пур те хăйсе-мех парăнаççĕ.**

XVIII-мĕш том, II-мĕш пай, 145 стр.

Пирĕнпе хирĕçекенсем: есĕр çителĕклĕ таран вĕренмен, тĕттĕм халăх пурăнакан патшалăхра сотсиалисăм тăватпăр тенипе ăс-сăр ĕç тума тытăнаттăр, - тесе темен ҍул та

каланӑ пире. Вӗсем пире: есӗр пурнӑç йӗркине—политтӗк тӗлӗшӗнђен те, сотсиаљнӑй ӗç тӗлӗшӗнђен те, теори хушнӑ пек, кирлӗ вырӑнтан улӑштарма пуçламарӑр; малтан пурнӑç йӗркине куљттурӑ тӗлӗшӗнђен улӑштармаллађђӗ, унтан вара тин политтӗкпа сотсиаљнӑй ӗç тӗлӗшӗнђен пурнӑç йӗркине улӑштармаллађђӗ, револђутси тумаллађђӗ, тесе калађђӗç. Анђах çав сӑмаха пурнӑç йӗркине пӗлмен çынсем, пирӗн тӑшмансем каларӗç пире. Епӗр малтан политтӗк тӗлӗшӗнђен револђутси турӑмӑр пулсан, халӗ ӗнтӗ куљттурӑ тӗлӗшӗнђен револђутси тӑватпӑр. Çапла епӗр ӗçе хамӑр тӑшмансем шутланӑ йенђен мар, урӑх йенђен пуçӑнтӑмӑр.

Халӗ ӗнтӗ, çав куљттурлӑ револђутсийе туса çитерсен, пирӗн респуплӗке пӗтӗмпех сотсиалисӑмлӑ çӗршыв теме йурать. Анђах пӗтӗм ӑслӑлӑха ӑнланса илме, ӑсталӑха вӗренме, пурнӑç йӗркине пӗлсе çитме,—пире питӗ шутсӑр йӑвӑр; куљттурӑ тӗлӗшӗнђен револђутси тума йӑвӑр, мӗншӗн тесен, пӗр йенђен, е п ӗ р вулама-çырма та пӗлместпӗр; тепӗр йенђен—епӗр питӗ ђухӑн, нађар пурнатпӑр; пире çитӳ çитменни хуплать; çитӳ

çитмесен, вĕренесси çинђен шухăшлама вăхăт та пулмасť, вăйхал та çитмест.

**28. Пирĕн умра икĕ сатађ (ĕç) тăраť: пĕри—респуплĕк ĕçне тытса тăракан машшина урăх тĕслĕ туса хурасси, тата ăна çăмăллатса, хура халăх йеннелле çывхартасси; тепри—хресђен халăхне çутта кăларса, унăн хуçайствине вăйлăлатса, малалла йарасси.**

XVIII-мĕш т. II-мĕш пайĕ, 145 стр.

Пирĕн умра икĕ пысăк сатађ; çавсене тусан, епĕр пурнакан кун-çулсем питĕ ђаплă пулĕç, ĕмĕрех вĕсене асăнса пурнĕç, вĕсем еппохă пулĕç (еппохă тесе кирĕк мĕнле ђаплă ĕçсемпе паллă пулнă вăхăта (çулсене) калаççĕ).

Пĕрĕмĕш сатађ, пĕр ĕçĕ—пирĕн респуплĕк ĕçне тытса, майа кĕртсе пыракан машшина пĕтĕмпех сӳтсе урăх тĕслĕ пуçтарса, йусаса, туса лартасси; вăл машшин халĕ пĕре те йурăхлă мар; вăл кивелнĕ машшина, аппарата епĕр авалхи вăхăтсенђен (ĕлĕкхи еппохăран) туйанса йулнă; пилĕкулт çул

хушшинђе вăл аппарата епĕр йусаса çитерейме-рĕмĕр, мĕншĕн тесен ку çулсенђе пирĕн тăшмансемпе кĕрешмелле пулђĕ.

Иккĕмĕш сатађ—хресђен халăхне çутта кăларас ĕç, ăна тĕрлĕ ăсталăха, ăслăлăха вĕрентес ĕç; урăхла каласан, халăха куљттурă сăнĕ кĕртесси. Хресђен халăхне куљттурлă тăвас тесен, копператси ĕçне сарăлтарасшăн тăрăшмалла. Пĕтĕм халăх копператсиленсен, епĕр икĕ урапах сотсиалисăм çĕрне çитсе тăрăттăмăр вара. Пĕтĕм хресђен халăхĕ çутта тухсан кăна, копператси ĕçне хутшăнĕ, копператсилленĕ; пĕтĕм хресђен халăхĕ, пачăр калана пек, куљттурлă револђутсисĕр, копператси çумне çыпăçăнаймĕ, копператсиленеймĕ.

**29. Пĕтĕм халăха пĕрлештермелле, ђи малтан—хресђен халăхне копперативсем туса пĕрлештермелле.**

XVIII-мĕш т., II пайĕ, 141—142 стр.

Йевропри „вĕреннĕ“ çынсен сăмахĕпе, пĕтĕм халăха копператсилентерес тесен, пĕтĕм халăха копператсишĕн, ăна малалла парас

тесе, хастарлă ĕçлеттерес тесен, пирĕн нумайах та ĕçлемелли йулмарĕ теме йураť. Апла пулсан, халĕ ĕнтĕ пирĕн пĕр ĕç „кăна“ йулнă. Халăх копператсине туса пĕрлешни пиtĕ усăлли çинђен, халăха çутта кăларса, ăнлантармалла, тата халăха çав копператсисенђе ĕçлеме вĕрентмелле. Туса çитерес ĕçĕ те çакă „кăна“ йулђĕ. Сотсиалисăм йĕркине куçма ытлашши ăслăлăхсем пире кирлĕ те мар. Анђах, çак каланă „кăнана“ выранă кĕртме, куљттурăллă револјутси тумасăр май çук; çав „кăнана“ тума пайтах халăха çутта кăларса куљттурлă тума тăрăшмалла. Çавăнпа пирĕн нихăçан та çакна манмалла мар: халăха сотсиалисăм çулĕ çине кăларас тесен, ытлашши шухăшласа, темĕн тĕрлĕ хуçкаланса хăтланкаламалла мар. Çак йенђен пăхса, каллемалле тĕрĕслесе пăхсан, ЕÇП-а кăларни пысăк утăмпа малалла кайни пулаť, мĕншĕн тесен ЕÇП вăтам хресђен кăмăлне килет, унтан нумай пĕлĕмлĕх ыйтмасť. Çак ЕÇП (çĕнĕ хуçайствă йĕрки) вăхăтĕнђе пирĕн йепле те пулин пĕтĕм халăха копператсилентерсе, çав ĕçе тума, йĕркене кўрсе çитерме ђилай вăхăт кирлĕ.

Ĕç лайăх ăнса пырсан, çак еппохă—вунă çул, йе çирĕм çул хушши тăсăлĕ. Çапах та, çак кунçулсем пирĕн пурнăçра питĕ ҍаплă еппохă темеллех пулĕç. Çак çитес çулсене епĕр ҍăнах ҍаплă ирттермесессĕн, пĕтĕм халăха çырăва вĕрентмесессĕн, çителĕклĕ йĕркеллĕ пурăнмасан, халăха кĕнеке уссине курма вĕрентсе çитерейменсен, халăхăн пурнăçне тўрлетсе малалла йарайм асан, выçлăхран мĕнтен çăлăнма пурлăх пухайм асан,—пирĕн ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитейм ĕ.

---

## Йулашки сӑмах.

Йулашкинҍен, ку кĕнекере çырни паллӑраххисем çинҍен кĕскен калар:

1. Ĕçхалӑхĕ, сотсиалисӑм йĕркипе пурӑнма пуçласан тин, ирĕклĕхе тухĕ; урӑхла каласан, пĕтĕм патшалӑхри халӑх, хӑйĕн пур хуçайствине пĕрле, пĕр планпа туса пырсан тин ирĕке тухĕ.

2. Пĕҍĕк, уйрӑм хуçайствӑпа пурӑнсан, хресҍен халӑхĕ нихăçан та çитмен пурнӑçран, нуштаран хӑтӑлас çук. Пĕҍĕк хуçайствӑра тĕрлĕ машшинсемпе ĕçлесе усӑ курма та, хуçайствӑна тўрлетме те май çук. Пĕрлешсе, пысӑк хуçайствӑсем тусан кӑна, пурнӑça тўрлетме май пулĕ.

3. Пĕрлешсе, пысӑк хуçайствӑсем тусан, ĕçлеме те сахал килĕ, тырпулӑ та аван пулма пуçлĕ. Хресҍен халӑхĕ пĕрле ĕçлесе тырӑпулӑ тунин уссине хӑй куçĕпех курманха; çавӑнпа Совет влаçĕ те хресҍенсене пĕрлештерсе, пысӑк хуçайствӑсем тутарас тесе, хĕсĕрлемест.

4. Вăтам хресҭене сотсиалисăм йĕркипе пурăнни пур йенҭен те усăллă; анҭах вăл ăна ăнласа çитеймен; Совет влаçĕ, сотсиалисăм йĕрки патнелле майĕпе, йерипен çул кăтартса, вăй çитнĕ таран, хресҭен кăмăлне кайакан майсемпе, хресҭен хуçайствине вăйлăлатма тăрăшаť, хресҭене пурнăçне тӳрлетме пулăшаť.

5. Анҭах, ĕлĕкхи пек уйрăм, пĕҭĕк хуçайствăпа пурăнсан, май килмест; апла ĕмĕрĕпех пурăнма çук. Хресҭенĕн пĕрлешес пулаť, копператсиленес пулаť! Копператси — пĕтĕм респуплĕкри хресҭен хуçайствине вăйлăлатса, хресҭен пурнăçне малалла йарса, йерипен сотсиалисăм патнелле илсе кайакан шанҭăклă çул.

6. Копператсире хресҭен халăхĕ, пĕрлешсе ĕçлесе, опҭăллă хуçайствă тума вĕренет.

7. Анҭах ĕçхалăхĕ влаçа хăй аллинҭех хытă тытса тăрсан, копператси Совет влаçĕпе пĕр каварлă пулса, улпутсемпе хапрăкпа савăт хуçисемпе кĕрешсен, — пĕтĕм хресҭен халăхне копператси сотсиалисăм патне çывхартĕ, усă курма та ăна пулăшĕ.

8. Совет власĕ копператсийа пĕтĕм вăйĕпе пулăшаť, тĕрлĕрен çăмăллăх (льхотта) параť.

9. Пĕтĕм ĕçхалăхĕн кашниннах копператсийе пĕрлешни кирлĕ. Çак ĕçе тума хресѣен халăхне нимĕнрен ытла çутта кăларни кирлĕ.

---

## Тӑнлантарни.

Сотсиалисӑм тесе пурнӑҫра пурлӑх тӗлӗшӗнҗен, правасем тӗлӗшӗнҗен саккунпа пур те пӗр тан пулса пурӑннине калаҫҫӗ. Сотсиалисӑмра пурте ӗҫлеҫҫӗ, ӗҫлеменнисем никам та пулмалла мар. Пӗтӗм ҫӗршыв, хапрӑкпа савӑтсем, ҫулйӗр ҫӳремелли хатӗрсем, пур происвотствӑсем пӗтӗм халӑх аллинҗе пулмалла; никам та ҫавсене хӑй ирӗкӗпе уйрӑм тытса тӑма пултараймаст̆. Уйрӑм вактӗвек хуҫайствӑсем пулмалла мар: пур хуҫайствӑ та, пӗр ҫӗре пӗрлешсе, пӗр пысӑк, халӑх хуҫайстви пулат̆. Анҗах пурин те ӗҫлемелле пулат̆. Мӗн ӗҫлесе тупнӑ пурлӑх—пурте халӑх пурлӑхӗ. Кашнийех, хӑйне пурӑнма мӗн кирлине, халӑх пурлӑхӗнҗен илет.

Сотсиалис тесе—сотсиалисӑм тӑвас тесе тӑрӑшакана калаҫҫӗ.

Хакĕ 18 пус